ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХĂН ДЕПУТАЧЕН, СУЙЛАНĂ ОРГАНĂН ЧЛЕНЕН, ВЫРĂНТИ ХĂЙ ТЫТĂМЛĂХĂН ДОЛЖНОÇА СУЙЛАНĂ ÇЫННИН ПОЛНОМОЧИЙЕСЕНЕ ПУРНĂÇЛАМА ПАРАКАН ГАРАНТИСЕМ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЕРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2025 çулхи çĕртме уйăхĕн 10-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче вырăнти хăй тытăмлăхăн депутачĕн, суйланă органăн членĕн, вырăнти хăй тытăмлăхăн должноçа суйланă çыннин полномочийĕсене пурнăçлама паракан гарантисем çинчен" 2012 çулхи юпа уйăхĕн 3-мĕшĕнчи 64 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2012, 10 №; "Республика" хаçат, 2018, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2020, авăн уйăхĕн 30-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 3 статьяна çакăн пек çырса 4-мĕш пай хушса хурас:

"4. Муниципаллă должноçсене йышăнакан тата полномочисене ялан-хи йĕркепе пурнăçлакан çынсене çак Саккунăн 13[1] статйипе килĕшӳллĕн Федерацин "Страхлав пенсийĕсем çинчен" 2013 çулхи раштав уйăхĕн 28-мĕшĕнчи 400-ФЗ №-лĕ саккунĕпе килĕшӳллĕн ватлăхпа (инвалидлăхпа) паракан страхлав пенсийĕ çумне е Раççей Федерацийĕнче халăха ĕçпе тивĕçтересси çинчен калакан Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕ-

шӳллӗн срокчен паракан страхлав пенсийӗ çумне уйăхсерен хушса тӳлекен укçа (малалла çавăн пекех – пенси çумне уйăхсерен хушса тӳлекен укçа) евӗр хушма пенси тивӗçтерӗвне палăртма пултараççӗ.";

2) çакăн пек çырса 13^1 статья хушса хурас:

"13^1 статья. **Пенси çумне уйăхсерен хушса тӳлекен укçа**

1. Муниципаллă пӗрлӗхӗн уставӗпе пăхса хăварнă срокра муниципаллă должноçсене йышăнакан тата полномочисене яланхи йӗркепе пурнăçлакан çынсене Федерацин "Страхлав пенсийӗсем çинчен" 2013 çулхи раштав уйăхӗн 28-мӗшӗнчи 400-ФЗ №-лӗ саккунӗпе килӗшӳллӗн ватлăхпа (инвалидлăхпа) паракан страхлав пенсийӗ çумне е Раççей Федерацийӗнче халăха ӗçпе тивӗçтересси çинчен калакан Раççей Федерацийӗн саккунӗсем-пе килӗшӳллӗн срокчен паракан страхлав пенсийӗ çумне уйăхсерен хушса тӳлекен укçана палăртма пултараççӗ. Уйăхсерен хушса тӳлекен укçана палăртмалли тӗслӗхсене, условисене тата йӗркене çак Саккунпа килӗшӳллӗн муниципаллă пӗрлӗхӗн уставӗпе палăртаççӗ.

2. Муниципаллă пӗрлӗхӗн уставӗпе пăхса хăварнă срокра муниципаллă должноçсене йышăнакан тата полномочисене яланхи йӗркепе пурнăçлакан çынсен пенсийӗ çумне уйăхсерен хушса тӳлекен укçана муниципаллă пӗрлӗхӗн уставӗнче палăртмалли тӗслӗхсене, условисене тата йӗркене палăртнă чухне пенси çумне уйăхсерен хушса тӳлекен укçана çапла палăртаççӗ:

муниципаллă должноçа яланхи йӗркепе виçӗ çултан пуçласа пилӗк çулччен йышăннă чухне тивӗçлӗ муниципаллă должноçăн должность шалăвӗнчен 55 процентран иртмен виçепе;

муниципаллă должноçа яланхи йӗркепе пилӗк çултан пуçласа вунă çулччен йышăннă чухне тивӗçлӗ муниципаллă должноçăн должность шалăвӗнчен 75 процентран иртмен виçепе;

муниципаллă должноçа яланхи йӗркепе вунă çултан пуçласа вун пилӗк çулччен йышăннă чухне тивӗçлӗ муниципаллă должноçăн должность шалăвӗнчен 85 процентран иртмен виçепе;

муниципаллă должноçа яланхи йӗркепе вун пилӗк çул тата ытларах йышăннă чухне тивӗçлӗ муниципаллă должноçăн должность шалăвӗнчен 95 процентран иртмен виçепе.

Пенси çумне уйăхсерен хушса тӳлекен укçана муниципаллă должноçа йышăнакана çав çыннăн страхлав пенсийӗ çумне хушса паракан çирӗплетнӗ тӳлевне кăларса тӳлеççӗ.

Пенси çумне уйăхсерен хушса тӳлекен укçа виçине шутласа палăртма муниципаллă должноçсене йышăнакан çынсен должность шалăвне вĕсем муниципаллă должноçсене пĕр вĕçĕм 12 тулли уйăх хушши (малалла – расчетлă тапхăр) йышăнни тăрăх палăртаççĕ (хăйсем суйланă тăрăх).

Расчетлă тапхăрта должность шалăвĕсем тĕрлĕ виçеллĕ пулнă муниципаллă тĕрлĕ должноçсене йышăннă çыннăн пенси çумне уйăхсерен хушса тӳлекен укçа виçине расчетлă тапхăрăн кашни уйăхĕнче муниципаллă должноçсем тăрăх палăртнă должность шалăвĕсене хушса тата пулнă укçа-тенкĕ калăпăшне 12 çине пайласа палăртнă должность шалăвĕн виçине палăртаççĕ.

3. Федерацин "Страхлав пенсийĕсем çинчен" 2013 çулхи раштав уйăхĕн 28-мĕшĕнчи 400-ФЗ №-лĕ саккунĕпе килĕшӳллĕн ватлăхпа (инвалидлăхпа) паракан страхлав пенсийĕ çумне е Раççей Федерацийĕнче халăха ĕçпе тивĕçтересси çинчен калакан Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн срокчен паракан страхлав пенсийĕ çумне уйăхсерен хушса тӳлекен укçана пама кирлĕ должность оклачĕсем тĕлĕшпе муниципаллă должноçсен (муниципаллă службăн должноçĕсен) переченьне хушса çырнипе килĕшӳллĕн çак Саккунпа палăртаççĕ.

4. Муниципаллă должноça йышăнакан çыннăн маларах вăйра тăнă Федерацин "Раççей Федерацийĕнче вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен" 2003 çулхи юпа уйăхĕн 6-мĕшĕнчи 131-ФЗ №-лĕ саккунĕн 35 статйин 16-мĕш пайĕн çиччĕмĕш абзацĕпе, 36 статйин 6-мĕш пайĕн 2^1-мĕш, 3-мĕш, 6–9-мĕш пункчĕсемпе, 6^1-мĕш пайĕпе, 40 статйин 7^1-мĕш пайĕпе, 10-мĕш пайĕн 5–8-мĕш тата 9^2-мĕш пункчĕсемпе, 10^1-мĕш пайĕпе, 73 статйин 1-мĕш тата 2-мĕш пайĕсемпе пăхса хăварнă сăлтавсемпе е тата Раççей Федерацийĕн коррупцие хирĕç кĕрешесси çинчен калакан саккунĕсемпе палăртнă чарусене, пӳлӳсене пăхăнманнине, тивĕçсене пурнăçламаннине пула, е тата Федерацин "Халăх влаçĕн пĕрлехи тытăмĕнче вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен" 2025 çулхи пуш уйăхĕн 20-мĕшĕнчи 33-ФЗ №-лĕ саккунĕн 21 статйин 1-мĕш пайĕн 1–3-мĕш пункчĕсемпе, 30 статйин 1-мĕш пайĕн 6-мĕш, 7-мĕш тата 10-мĕш пункчĕсемпе тата 2-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă сăлтавсемпе полномочийĕсене пăрахăçланă тĕслĕхре пенси çумне уйăхсерен хушса тӳлекен укçана палăртмаççĕ.

5. Чăваш ССР халăх депутачĕсен район (хулари) канашĕн председателĕн, Чăваш АССР ĕç çыннисен депутачĕсен районти (хулари) ĕç тăвакан комитечĕн председателĕн, Чăваш АССР, Чăваш ССР халăх депутачĕсен

районти (хулари) ĕç тăвакан комитечĕн председателĕн должноçĕсене тата 2006 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕччен Чăваш Республикин район (хула) администрацийĕн пуçлăхĕн должноçне яланхи йĕркепе професси шайĕнче йышăнакан çынсене муниципаллă пĕрлĕх уставĕпе пăхса хăварнă тĕслĕхсенче, условисемпе тата йĕркепе пенси çумне уйăхсерен хушса тӳлекен укçана палăртма пултараççĕ.";

3) çакăн пек çырса хушса çырни хушса хурас:

"Чăваш Республикин
"Чăваш Республикинче вырăнти хăй
тытăмлăхăн депутачĕн, суйланă
органăн членĕн, вырăнти хăй
тытăмлăхăн должноçа суйланă
çыннин полномочийĕсене пурнăçлама
паракан гарантисем çинчен"
саккунĕ çумне хушса çырни

Федерацин "Страхлав пенсийĕсем çинчен"
2013 çулхи раштав уйăхĕн 28-мĕшĕнчи 400-ФЗ №-лĕ саккунĕпе
килĕшӳллĕн ватлăхпа (инвалидлăхпа) паракан страхлав пенсийĕ
çумне е Раççей Федерацийĕнче халăха ĕçпе тивĕçтересси çинчен
калакан Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн срокчен
паракан страхлав пенсийĕ çумне уйăхсерен хушса тӳлекен укçана
пама кирлĕ должность оклачĕсем тĕлĕшпе муниципаллă
должноçсен (муниципаллă службăн должноçĕсен)
переченĕ

Федерацин "Страхлав пенсийĕсем çинчен" 2013 çулхи раштав уйăхĕн 28-мĕшĕнчи 400-ФЗ №-лĕ саккунĕпе килĕшӳллĕн ватлăхпа (инвалидлăхпа) паракан страхлав пенсийĕ çумне е Раççей Федерацийĕнче халăха ĕçпе тивĕçтересси çинчен калакан Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн срокчен паракан страхлав пенсийĕ çумне уйăхсерен хушса тӳлекен укçана пама кирлĕ должность оклачĕсем тĕлĕшпе муниципаллă должноçсен (муниципаллă службăн должноçĕсен) ячĕ	Федерацин "Страхлав пенсийĕсем çинчен" 2013 çулхи раштав уйăхĕн 28-мĕшĕнчи 400-ФЗ №-лĕ саккунĕпе килĕшӳллĕн ватлăхпа (инвалидлăхпа) паракан страхлав пенсийĕ çумне е Раççей Федерацийĕнче халăха ĕçпе тивĕçтересси çинчен калакан Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн срокчен паракан страхлав пенсийĕ çумне уйăхсерен хушса тӳлекен укçана пама пăхса хăварнă должность ячĕ
1	2
Муниципаллă округ, хула округĕн пуçлăхĕ (1)	Муниципаллă округ, хула округĕн пуçлăхĕ

1	2
Муниципаллă округ пуçлăхĕ (1)	Муниципаллă район пуçлăхĕ
Муниципаллă округ администрацийĕн территори пайĕн пуçлăхĕ (2,8)	Хула поселенийĕн, ял поселенийĕн пуçлăхĕ
Муниципаллă округ, хула округĕн администрацийĕн пуçлăхĕ (1)	Чăваш ССР халăх депутачĕсен районти (хулари) канашĕн председателĕ, Чăваш АССР ĕç çыннисен депутачĕсен районти (хулари) ĕç тăвакан комитечĕн председателĕ, Чăваш АССР, Чăваш ССР халăх депутачĕсен районти (хулари) ĕç тăвакан комитечĕн председателĕ, Чăваш Республикин район (хула) администрацийĕн пуçлăхĕ".

2 статья

Çак Саккун 2025 çулхи çĕртме уйăхĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хулă
2025 çулхи çĕртме уйăхĕн 11-мĕшĕ
38 №